Т41

ВЕНИАМИН ТИМАКОВ

32186-чув



# УПАСАРРИ

## УПАСАРРИ

Темле юмах ман ăшăмра йăл илнĕн
Ҫаларăм хыпăнсах:
— Упасарри!
Паян юри, тен, ун патне эп килтĕм,
Вăл — паллакан этемсенчен пĕри.

Унра мĕскер тĕлĕнмелли эп тупнă?
Нумай вĕт тĕрлĕ курăк çĕр çинче.
Пĕчĕкренех çарран çӳренĕ, чупнă
Вар-васанта, хирте çу иртиччен.

Юр-кĕрт кайсассăн, вĕтлĕхре кĕреннĕн
Тапса тухать çап-çамрăк вĕлтĕрен.
Ана татса алсем вут пек хĕмленнĕ,
Вăл ишнĕ кунсерен тăр шӳрпере.

Пултран, серте пире пулман-и çывăх
Нушаллă манăçми ачалăхра?
Тен, вĕсемех пире хăварчĕç сывă,
Чĕре сури парса йывăрлăхра.

Ҫу иртиччен, тен, вĕсене чăмлană
Путексенчен те ытларах эпир.
Сире чунра ĕмĕрлĕхех хăварнă,
Тăван çырма, асран кайми уй-хир!

Сĕтеклĕ курăксем!
Сире ман кăмăл
Ачаш çил хумĕ пек лăпкать паян.
Сире курсан — ĕмĕтленмешкĕн çăмăл,
Инçе çула тухса кайма аван.

Туятăп эп: упасарри пĕр хушă
Чĕнет паян ачалăх тĕнчине.

Ун чухнехи хавас е тертлĕ куншăн
Каллех хĕмлентеретĕп чĕрене.

Упасарри!
Эс пĕр юмах упраттăн,
Ачасене ир-каçăн илĕртсе,
Телей çинчен час-час шутлаттараттăн.
Куратчĕç măннисем те тĕлĕксем.

Пĕр хут кăна чечек çуратăн имĕш
Çĕрле эс сĕм вăрман уçланкинче.
Ахаль чухне ялан ларатăн симĕс,
Асамлăх пытарса çулçусенче.

Эп илтнĕччĕ: çеçкӳ сан, çурăлсассăн,
Кăвак хуппи пек çутăлса сӳнет.
Этем çав вăхăтра телей ыйтсассăн,
Чăнах, тет, унăн ĕмĕчĕ çитет.

Эп тĕлĕкре сана час-час кураттăм,
Темскер ыйтса юлма пикеннĕ пек.
Вăрман, эс чарăна пĕлми шавлаттăн,
Чуна çӳçентерсе кĕрлевӳпе.

* * *

...Пĕчĕкскер, эп вăрманта аташнă.
Çип пекех çыхланнă сукмаксем.
Ман ума хăлаçланса кармашнă
Палламан хăватлă йывăçсем.

Туратсен ытамĕ вĕç-хĕррисĕр.
Хыпăнсах утатăп малалла.
Кайăксем, эсир те ерĕçӳсĕр:
Кăтартмастăр шыракан çула.

Ват юман
Аллисемпе вăраххăн
Ҫаç валли хура пустав суйлать.
Авăс темшĕн тĕксĕммĕн, улаххăн
Ҫӳршипе каварлашса йăслать.

Туратсем мана алран туртаççĕ,
Ҫакланаççĕ кивĕ кĕперен.
Тĕттĕм-çке ытла та çимĕк каçĕ.
Уйăх та пăхмарĕ тӳперен.

Ҫăвак çутă сапăнчĕ сасартăк,
Ĕшнере эп чарăнтăм тăпах.
Йăпануллă ырă тĕлĕк мар-тăк,
Ҫилнĕ пулĕ ман пата юмах.

Эп куратăп:
Ҫăн-кăвак çеçкеллĕ
Чĕтренет, çунать упасарри!
Таврара ытарайми çӳçеллĕн
Уçăлать таса илем карри.

Ҫăмăллă куç евĕр, кăмăл сунчĕ
Халиччен курман кăвак чечек.
Ман умра вăл кăварланчĕ, çунчĕ,
Савăкланчĕ самантрах тĕнче.

Эп телей ыйтмаллине асилтĕм,
Ĕлкĕртĕм: «Аттем, килсем»,— теме.
Йăлкăшрĕ чечек: «Часах вăл çитĕ»,—
Терĕ те çухалчĕ тĕттĕмре.

Инçетри вăрман, сăрт-ту, шыв урлă
Ҫывхарса пырать хуллен этем.
Питĕнче хĕвел шевлиллĕ кулă,
Ырă сăнĕ чунăма çĕклет.

Сан çулу чăнах та йывăр, вăрăм.
Хăш хиртен эс тухрăн вăранса?
Хăш тĕлте тăпра çĕкленчĕ йăрă,
Çивитти пулмашкăн пăрахса?

Ахалех анне йĕрет ир-каçăн,
Ачисен шăпишĕн кулянса.
Шухăшсем ун пуçĕнчен каймаççĕ:
«Тен, паян çитмест-ши çаврăнса?»

Халь санпа пĕрле çӳретĕп эпĕ.
Çак телей пырас пек ĕмĕре!
Ĕшнене кĕрсе тататпăр çеçпĕл,
Çул тытатпăр улăха, хире.

Манăн та пурах-мĕн ăраскалăм,
Тертшĕн парнелет вăл телейне.
Ĕмĕт, тĕтрере пулин те, паллă:
Курмалла хам туртăм çутине.

Эп сана, аттеçĕм, астумастăп,
Тăшманпа эс кайнă çапăçма.
Пурпĕр санăн кăмăлна туятăп,
Юлчĕ вăл яланлăх чунăма.

* * *

Империсен хаяр валеçĕвне
Пушар енне тĕк вĕçнĕ пек эс кĕнĕ.
Шăпа сана кăшт пăрнă айккине,
Пуласлăха çитсе курма та сĕннĕ.

Хĕн-тертлĕн çитнĕ эс тăван каса.

Аçу килне кив шинельпе кĕрсессĕн,
Килйыш куçне шăлайнă савăнса.
Çак вăхăт туйăннă нихçан иртмессĕн.

Каллех çӳретĕн шавлă улахра.
Çирĕмре çеç-ха. Çамрăк та кĕрнеклĕ.
Туй пуласса кĕтеççĕ халăхра.
Анчах саманисем ку чух инкеклĕ.

Тин ирĕк çĕнсе илнĕччĕ хресчен.
Каллех иккен ăна чура тăвасшăн.
Хĕсеççĕ Совета тăват енчен,
Империсем ăна йăлтах таптасшăн.

Телей кураймĕ лăпкă Сăхăтпуç,
Пусмăрçăсем каллех хуçа пулсассăн.
Тăнран кăларĕç кулакпа улшуç,
Вĕсем тасалĕç, эсĕ хĕç тытсассăн.

* * *

Украина ялĕнче
Тĕл пулать икĕ салтак.
— Сывă-и, тăван пичче! —
Тет сухал пуснийĕ, ак.

Тинкерет, сăнать тепри,
Палласа илет сăнран:
— Ха, эс пĕтнĕ мĕн тери,
Уйăртăм аран-аран.

Савăнса атте пуплет:
— Сăн тем мар-ха. Сывă юлтăм.
Амансан, госпитале
Леçрĕç те... Вăрах эп выртрăм.

— Вутлă-штыклă çул çинче
Эп те пиçрĕм,— тет Хĕветĕр.—
Час лăпланĕ-ха тĕнче,
Час çĕнтерĕпĕр-ха, Петĕр.

Çук Деникин. Çук Колчак.
Ырлăх пулмĕ Врангеле те.
Хамăр савнă укăлча
Кĕтсе илĕ-ха пире те...

Тем те курнă тăвансем
Шăкăлтатрĕç пĕр кана.
Киле выртрĕç çулĕсем
Çĕнтерсен кăна.

* * *

Аçу килĕ...
Хĕвел тухиччен
Улăха сывлăм тăрăх утатăн.
Ўснĕ пулĕ хăяр халиччен.
Çынсене килĕн-килĕн пухатăн.

Лавсемпе каймалла Вăрмара:
Хăярпа та эртел укçалантăр.
Пасартан килнĕ чух эс вара
Мăнçырма ялĕ витĕр тухан-тăр.

Унта пур сан çураçнă хĕрӳ.
Туй тума килтисем хатĕрленнĕ.
Эсĕ пулăн кĕçех çĕн кĕрӳ.
Хурăнташ сăйланса час киленĕ.

Пурнăçланчĕ иккен шутлани.
Тăрса юлчĕ туй-сăй инçене.
Тăрмашать улăхра çĕр сынни,
Шеллемест вăл колхозшăн вăйне.

Ачапчаллă, татуллă çемье.
Ыр кунçул...
Ахальтен кĕрешмен-тĕр.
Çавсенче эс куран телее,
Çĕр çынни, ырă кăмăллă Петĕр.

* * *

Эс чунӑмрах, салтак атте...
Ак виҫҫӗмӗш вӑрҫа тухатӑн.
Упаленет ачу ҫӗрте.
Ӑна хуллен илсе йӑтатӑн.

Тулта кӗтеҫҫӗ юлташсем.
«Фронта, фронта!» — тет шавлӑ пуйӑс.
Пурин те янт кутамккисем,
Салхуллӑн нӑйкӑшать хуткупӑс.

Пӗри ҫӗрте упаленет,
Сак тӑрӑх темиҫен чупаҫҫӗ.
Сыв пулӑр. Юнлӑ уй чӗнет.
Салтак чысне ҫухатмӗ аҫӑр.

Ҫӗлен, ав, талпӑнать кунта,
Ӑна чармасӑр таврӑнмастпӑр...
Ӑсанчӗҫ вакунсем вута,
Сӑпка чӗриклетейрӗ сансӑр.

...Пӗлмест никам тӑпру тӗлне.
Ав, Сталинград кӑштах чухлать.
Сан ятупа шавлать ӗшне,
Саркайӑк ир те каҫ юрлать.

Сан ятупа вар-васанта
Вутне чӗртеҫҫӗ чечексем.
Вӑрман та, улӑх та унта
Кураҫҫӗ чӗрӗ тӗлӗксем.

* * *

Пир сумкӑра ик-виҫӗ кӗнеке,
Кӑранташпа пӗр-ик ҫӳхе тетрадь.
Тинех, тинех шкула ҫӳретпӗр-ҫке,
Сӑртра ялти чи пысӑк ҫурт ларать.

Тĕнче ытла та сарлака иккен.
Çакна чухлатпăр вуласа, илтсе.
Указкăпа карттăсене тĕллен,
Хула пăнчисене тупас тесе.

Упа е кашкăр мелсĕр ӳкерен:
Хырăмĕнчен те пысăкрах ури.
Задачăсем те пур-мĕн тĕнчере,
Тупсăмĕсем тухмаççĕ-мĕн юри.

Вĕрентекен — чи аслă, чи ăста,
Чи пархатарлă, кăмăллă этем,
Асамçă пек пырса кĕрет класа,
Пĕлӳ илесшĕн тĕлкĕшет хевтем.

Вĕрентекенĕн ăшă куллине,
Пире куллен-кунах ыр суннине
Туйса, чĕрем ĕмĕтпеле çунать,
Телей часах килессĕн туйăнать.

Ак, тĕлĕкре упасарри каллех
Уçланкăра самантлăх ялтăрарĕ.
«Ачам,
Мĕскер ыйтатăн — çав килет»,—
Тесе мана вăл кăмăллă каларĕ.

Ĕмĕтĕме ăна пĕлтертĕм эп:
Пулас килет шкулта вĕрентекен.
Ялта ăна кашни килте хисеп,
Аспа унран çуках пуль иртекен.

Ак... пултăм эп урок ирттерекен.
Шăп вăтăрăн лараççĕ тинкерӳллĕн.
Сĕтел умне тăма аван иккен.
Çавах та темшĕн чунăм шикленӳллĕ.

Анчах... вĕçленчĕ чун йăпатмăш тĕлĕк.
Ҫаллех... учитель мар эп, ача çеç.
Пӳрт тăрринче — кăвак хупписĕр пĕлĕт,
Январь хĕвелĕ тухмалла кĕçех.

* * *

Стена çинче ташлаççĕ пăнчăсем,
Пĕр-пĕринпе маттуррăн тĕркĕшеççĕ,
Ҫуç умĕнче тухса таçта çĕтеççĕ,
Ҫурхи кĕтӳ пек канăçсăр вĕсем.

Йĕрсем шăваççĕ.
Ҫаврăнать тĕпел.
Ак «ывăлăм» тесе чĕнен ӳкерчĕк,
Ак, мăрăлти, хаваслă сĕркеленчĕк,
Ак сĕлеке çăттаракан сĕтел.

Эп пĕччен мар — Хĕл мучипе пĕрле.
Ҫантăксене вăл кĕмĕлпе сăрланă.
Хальччен курман ӳкерчĕксем тултарнă.
Хĕл мучирен ытла тĕлĕнмелле.

— Пальмăсене мĕскершĕн хыпăнсах
Сив кантăксем çумне çыпăçтаратăн?
Тăхта-ха, темĕскер пăтраштаратăн.
Ҫур, шăннипе выртатăп хутланса.

Мучи калать:
— Январĕ ăшă мар.
Ҫĕпесĕр йăмрасем сиксех чĕтреççĕ,
Хутланнă пралуксем пĕрмай йĕреççĕ.
Вĕсем кил-çуртсăр, айăпсăр, сыв мар.

Пурне те шанăç, ĕненӳ кӳме
Эп çулçăсем, оазиссем сăрлатăп.
Пĕлетĕп эп кичемлĕхе кӳлме,
Ун çунипе хаваслăх турттаратăп.

— Ку юмахра-çке пĕтĕмпех, пичче!
Асаннесем те çакнашкал калатчĕç,
Çĕрле вуншар халап ярса паратчĕç.
Вĕсен кушелĕ — итлесен — ирччен.

— Пепкеçĕм, йăнăшатăн, тĕнчере
Пулман нихçан та халаппа юмах...
Юмах вăл — пурнăç, вĕçеври чĕре.
Вăл иксĕлми телей.
Вăл хăй çăтмах.

Ӳссен сана упасарри тыттарĕç.
Çеçки асамлăн ялтăрĕ çĕрле,
Сана вăл аслаçу патне уттарĕ.
Е утăн ху ачусемпе пĕрле.

* * *

Ёшнесенче — кĕрхи сап-сар тӳшек.
Иртет ун урлă кулленхи сукмак.
Шкул сумкисем нихçанхинчен кӳпшек:
Хут-кăранташ, кĕнекесем, туртма.

Çич çул вĕреннипе çырлахтармасть
Чун-чĕремри хистевлĕ ăшвăркав.
Куллен утатпăр вунă çухрăмра
Тантăшсемпе.
Çул тăршшĕпех шăв-шав.

Вунпиллĕкре...
Мĕн пурăнни, туйни
Чи илĕртӳллĕ ĕмĕт кӳнĕ вăхăт.
Ун чух секвойя пек пултран туни,
Таçти Амур пек анлă — пĕчĕк Сăхăт.

Хĕл пуличчен е сивĕ хĕл иртсен,
Вун çухрăмри шкула хавас çӳретпĕр.
Çавах, раштавăн шартлами çитсен,
Хваттер тупса, виç уйăха кĕретпĕр.

Эрнесерен çитен кутамккапа.
Унта пĕр çăкăр — аларманьсарлакăш.
Кĕрпе та аш илен кăштах хăвпа.
Вĕри яшкасăр, инкеке, выртмасть ăш.

Ытти чухне утатпăр сумкăпа
Уй урлă, улăхпа е вăрманпа.
Çул инçĕш хăратмасть хавас йыша,
Янра тăрать пĕр чарăнми шăв-шав.

Анчах хăш чух ку шавлă ушкăнран
Кăштах ман пăрăнмашкăн пурччĕ кăмăл.
Çӳрес килетчĕ хам шухăшăмра,
Хам тĕллĕн, сассăр, юмахри пек çăмăл.

Усланкăра пĕччен епле аван.
Кашни çулçăшăнах чуна уçатăн.
Пуплет çăка, кăварланать палан,
Çерем çинче килти пекех ларатăн.

Упасарри хавассăн чĕтренет,
Шкул ачине тус выраннех хурать.
Ун çумĕнчи çинçе яш вĕрене
Ыр суннă евĕр хумханса ларать.

Хĕлле вăрман касатчĕç ку тĕлте,
Юр айĕнчен вăл тухнăччĕ кăшт ешĕл.
Январь сивви пите-куçа ĕнтет,
Вăл тĕршĕннĕ. Каллех ăшша кĕресшĕн.

Ларатчĕç йывăççем пас тутăрпа,
Хĕвел чĕтретчĕ ун эрешĕ витĕр.
Эп витрĕм курăка таса юрпа:
Çуркуннене ун симĕс тумĕ çиттĕр.

Вĕçетчĕ ĕнтĕркенĕ кăсăя,
Туратсенчен ахахлă пас тăкса.

Час çитмĕ ун кĕрекине уяв.
Хăш чух çÿрет-ха, мĕскĕн, выçăхса.

Хам сумкăна силлетĕп юр çине:
Тĕпренчĕксем чĕре сури пулинччĕç.
...Сив илемпе çиçсе çунать ĕшне.
Çу кунĕнче ун тĕсĕ çитмĕл çиччĕ.

Çак илеме ман ÿкересчĕ шеп
Тăван сăмахăн çутă сăррипе.
Туйăмсене те кăтартасчĕ теп
Тасан, çунатлăн, уçă чĕрепе.

...Каллех пĕррехинче ак тĕлĕкре
Упасарри хĕм тăкнине эп куртăм.
Каларăм: «Сăвăсем ман ĕмĕтре,
Ĕмĕрлĕхе юлать пуль çакă туртăм.

Вăй пар мана, чечекĕм, малашне
Ялан юратнă халăхшăн çунмашкăн,
Тăван чĕлхен пин саслă кĕслине
Чун хушнипе кăна алла тытмашкăн!»

Асамлăн йăлтăрарĕ вут чечек,
Телей сунатăп, çун, кĕреш эс терĕ.
Кунçулăн, йывăр ĕçĕн нушинче
Пуçна ан ус, ан чак тесе пиллерĕ.

* * *

Ĕнтĕ юлчĕ хыçа çирĕм çул...
Хам телейшĕн эп тухрăм çула.
Чухлаймасăр, пĕлмесĕр тем чул
Асаплантăм хĕлле те çулла.

Мăк хуплана хура тунката
Муми пек каласусăр, тунать.
Кăткăсем те ăна, тупата,
Перĕнсе салатассăн туйнать.

Çук, иртеççĕ иккен еккипе.
Вĕсен ĕçлĕ çулне эп сăнатăп.
Айккинче юмансем йĕркипе,
Вĕсенче аслă тăнăç куратăп.

Пурте çывăх пек.
Вата вăрман
Хăйĕнче ман ӳте те туять пек.
Тĕкĕр çук ун. Хăйне сăнама
Ĕшнене чунăма тăратать пек.

Вăрманта аташса çӳрекен
Путек евĕр, сахал-и утатăн?
Пурпĕрех уй хĕрри пур иккен.
Терт курсах çул палли те тупатăн.

...Унтанпа ĕшнере çирĕм çул
Юмаха çывăхлатрĕç чăнпа.
Пурпĕрех эс, чечекĕм, йăл кул:
Ман чĕрем ĕмĕр пулĕ санпа.

* * *

Темле юмах
Ман ăшăмра йăл илнĕн
Қаларăм хыпăнсах:
Упасарри!
Паян юри, тен, ун патне эп килнĕ,
Вăл паллакан этемсенчен пĕри.

Эрешлĕ çулçисем хуллен чĕтренчĕç
Хăватлă юмансен сулхăнĕнче.
Пытаннă мар-и кивĕ, вата эра
Вĕсен пин йĕрлĕ шеп тĕррисенче?

Сĕм ĕмĕрти хăрушă динозаврăн
Çĕр пулнă улăпла кĕлеткинчен

Вăй илнĕ пек, тымарĕ унăн тарăн,
Пӳ-сийĕ унăн сарлака, чечен.

Чĕрем паян та ĕмĕтлĕн, пĕр вĕçĕм
Юманлăх ĕшнинче пуплет унпа.
Ӑна йăлт паллă манăн пĕчĕк ĕçĕм,
Ҫурнать ăна ман пысăк мар шăпам.

Эп пӳрт туман.
Хитрен кăна картаймăп
Пулас пура хăтне пĕренерен.
Ун тулашне эрешлесе сăрлаймăп.
Пымасть ман аллăм.
Хăть çиллен, кӳрен.

Вăй-халăма виçсе, парне илеймĕп
Акатуйри хĕрӳ кĕрешӳре.
Ҫарап е самолет эп çӳретеймĕп —
Ҫашнин хăй вырăнĕ ку тĕнчере.

Анчах...
Хам туйăмсен вăрманĕнче
Асаплансах эп
Сăвă-пӳрт лартасшăн.
Вăл çитĕнтĕр хĕрӳ шухăшсенчен,
Кĕрешĕве вăл чĕнтĕр ыр малашшăн.

Вăл çын чун-чĕринчи тасалăха
Татах амаланмашкăн пулăшсассăн,
Кунçулĕнчи çут пархатарлăха
Хавхалатса пĕр чĕптĕм вăйлатсассăн,
Телейлĕ пулăттăм.
Упасарри
Ҫаллех мана çула тухмашкăн чĕнĕ.
Ҫĕн ĕмĕтсен горизонтри карри
Ҫаллех телей те, тертленӳ те сĕнĕ.

1968—1976